27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
МАРТ
26
ВЫРСАРНИКУН
61(6556) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне ЖУКОВА

УКРАИНĂРИ 1-МĔШ фронт çарĕсем паян, мартăн 25-мĕшĕнче, вăйлă çапăçнă хыççăн паха чугун çул узелне тата нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пунктне — ПРОСКУРОВ хулине штурмласа туртса илнĕ.

ПРОСКУРОВ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче ГРЕЧКО генерал-полковникăн, ГОРДЕЕВ генерал-майорăн, ШМЫГО генерал-майорăн, ЧЕРНЫЙ полковникăн çарĕсем, РЫБАЛКО генерал-полковникăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн МАЛЫГИНĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ПАНФИЛОВĂН танкисчĕсем, артиллери генерал-полковникĕн ВАРЕНЦОВĂН, артиллери генерал-майорĕн БРИЧЕНОКĂН, артиллери генерал-майорĕн ВОЛКИНШТЕЙНĂН, артиллери генерал-майорĕн САНЬКОН артиллерисчĕсем, авиаци генерал-полковникĕн КРАСОВСКИН, авиаци генерал-майорĕн ГОЛОВНЯН, авиаци генерал-майорĕн ЛАКЕЕВĂН, КОТЕЛЬНИКОВ полковникăн, НЕЧИПОРЕНКО полковникăн летчикĕсем тата СТОНОГА полковникăн саперĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ПРОСКУРОВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ПРОСКУРОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 25-мĕшĕнче, 21 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăвата тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, ПРОСКУРОВ хулине туртса илнĕ УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ПРОСКУРОВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи мартăн 25-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 24-мĕшĕнче ТАРНОПОЛЬ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем СЕРЕТ шывĕ урлă ăнăçлăн каçнă та тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăннă. Çав шутра—ЗВЫЖИН, МАНАЙЮВ, ТРОСТЯНЕЦ, ЛОПУШАНЫ, БЯЛОГЛОВЫ, БЗОВИЦА, НАСТЕРОВИЦА, ЦЕПРОВ, АНЕЛЮВКА ятлă пысăк ялсем тата ЦЕБРОВ ятлă чугун çул станцийĕ. Пирĕн çарсем ТАРНОПОЛЬПЕ ЛЬВОВ хушшинчи чугун çулпа шоссе çулне татнă.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлăн наступлени туса пынă, тăватă кун хушши çапăçса, 60 километртан пуçласа 100 километра çити малалла куçнă, операцисем тăвас тĕлĕшпе паха чугун çул узелĕ пулса тăракан ЧЕРТКОВ хулине, Тарнополь облаçĕн район центрĕсене—ГУСЯТИН хулине, ДНЕСТР шывĕ çинчи ЗАЛЕЩИКИ хулипе чугун çул узелне, ТЛУСТЕ хулипе пысăк чугун çул станцине, СТРУСОВ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса МАРЬЯНКА, ЮЗЕФОВКА, ЛАДЫЧИН, ВАРВАРИНЦЫ, КОБЫЛОВЛОКИ, ЯГЕЛЬНИЦА, ДЗВИНЯГ, ШУПАРКИ, ЕЗЕЖАНЫ, ПРОБУЖНА, ВЕЛИКОЕ ЧАРНОКОНОЬЦЕ, ТЛУСТЕНЬКЕ, ВАСИЛЬКОВЦЫ, ЧАБАРОВКА, ГОЛЕНИЩЕВО, КУЗЬМИНЧИК, ЛЕСОВОДЫ, КРЕМЕННАЯ, НОВОСЕЛКИ, СТАРОЕ ПОРЕЧЬЕ, НОВОЕ ПОРЕЧЬЕ ятлă пысăк ялсене тата ЧАБАРОВКА, ВАСИЛЬКОВЦЫ, ВЫГНАНКА, ЯГЕЛЬНИЦА, ВОРВУЛИНЦЫ ятлă чугун çул станцийĕсене йышăннă.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем çав çапăçусенче, туллимар даннăйсем тăрăх, çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 300-е яхăн, бронеавтомобильсемпе бронетранспортерсем — 120, тĕрлĕ тупăсем — 500 ытла, минометсем — 490, пулеметсем—760, автомашинăсем — 5.000 ытла, танксемпе ытти çар хатĕрĕсем тиенĕ чугун çул эшелонĕсем—8, тĕрлĕ складсем — 30.

Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 20.000 виллине яхăн выртса юлнă. Нимĕçсен 3.500 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

ПРОСКУРОВ енче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, Каменец-Подольск облаçĕнчи район центрне — МЕДЖИБОЖ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă. Çав шутра—ОЛЕШИН, ЗЕРЕЧЬЕ, ЛЕЗНЕВО, ДАВИДКОВЦЫ, ПИРОГОВЦЫ, РУСАНОВЦЫ, ТРИБУХОВЦЫ, РУДНЯ, ВОЙТОВЦЫ, ЧЕРНИЛИВЦЫ ятлă пысăк ялсем. Пирĕн çарсем ПРОСКУРОВ хули патне таччăнах çитсе тухнă та халĕ тăшманпа хула тулашĕнче çапăçма пуçланă.

МОГИЛЕВ-ПОДОЛЬСКИЙ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, наступление çаплах вăйлатса пырса, Черновица облаçĕн СЕКУРЯНЫ район центрне, Молдаван ССР-ĕн ФЛОРЕШТЫ район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ОКНИЦА, БЫРНОВА, ЧЕРНОЛЕУКА, КОРБУ, ЦАУЛЬ, МИХАЙЛЕНЬ, ПЕЛИНИЯ, КУБОЛТА, ФРУМУШИКА, ГВОЗДОВА, КОШЕРНИЦА ятлă пысăк ялсем тата СОФИЯ, ПЕТРЕНИ, ПЕЛИНИЯ ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем БЕЛЬЦЫ хули патне таччăнах пырса çитнĕ те тăшманпа хула тулашĕнче çапăçма тытăннă.

ГАЙВОРОН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă. Молдаван ССР-ĕн район центрне КАМЕНКА хулине (ДНЕСТР шывĕн сулахай енче) туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 20 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—ПОДОЙМА, ЗАГНИТКОВ, ПИСАРЕВКА, ШЕРШЕНЦЫ, ЛАБУШНАЯ, БУДЕИ, СМОЛЯНКА, САРАЖИНКА ятлă пысăк ялсем.

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем икĕ кун хушши вăйлă çапăçнă хыççăн тăшманăн КĂНТĂР БУГ шывĕн анат тăрăхĕнчи вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулса тăракан ВОЗНЕСЕНСК хулипе пысăк чугун çул станцине тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Мартăн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 82 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 24 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă, нимĕçсем Совет чаçĕсене хирĕç тăма хăтланнисене пурне те пирĕн танковăй соединенисемпе пехота çав тери вăйлăн пыра-пыра çапса пĕтерсе лартнă. Çĕмĕрсе тăкнă нимĕç дивизийĕсем каялла чакаççĕ, хăйсем персе тăнă позицисенче тата çулсем тăрăх тупăсем, танксем, хăй тĕллĕн персе тăмалли установкăсем тата автомашинăсем пăраха-пăраха хăвараççĕ. Ĕнер Копычинцы хулине туртса илнĕ, пирĕн çарсем паян тăшманăн Чертков хулинчи гарнизонне вирлĕн пырса çапнă. Совет танкĕсемпе моторизованнăй пехоти тăшмана ывăтса янă та операцисем тăвас тĕлĕшпе паха чугун çул узелĕ пулса тăракан Чертков хулине туртса илнĕ. Серет шывĕ урлă хăвăрт каçса кайса, пирĕн çăмăллăн куçса çӳрекен соединенисем кăнтăралла вăркăннă. Вĕсем хăйсен çулĕ çинче тăшманăн резерври чаçĕсене, унăн тылĕсене тата штабĕсене аркатса пыраççĕ. Фашистла нимĕç захватчикĕсенчен умлăхыçлăн Ягельница ятлă пысăк яла, Тлусте хулине, Днестр шывĕ çинчи Залещики ятлă пысăк чугун çул станцине тасатнă. Пирĕн ытти чаçсем вăйлă çапăçнă хыççăн Гусятин хулипе Струсов хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 400 пункта ытла йышăннă. Чылай районсенче нимĕçсен гарнизонĕсемпе вĕсен çарĕсен ушкăнĕсене çавăра-çавăра илсе, ăнăçлăн пĕтерсе тăкнă.

* * *

Проскуров хули енче тăшман, контратакăсем туса, пирĕн наступлени тăвакан çарсене чарма хăтланнă. Пĕр соединени чаçĕсем, ăста маневр туса, нимĕçсене каялла ывăтса янă та Каменец-Подольск облаçĕнчи Меджибож хулине тытса илнĕ. Пирĕн ытти соединенисем нимĕçсем хытă хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та, Проскуров хули патне таччăнах пырса çитсе, тăшманпа хула урамĕсенче çапăçма пуçланă. Кун каçиччен 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 30 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупине персе сĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. Урлă-пирлĕ йăранланса выртакан çӳллĕ вырăнсемпе тата сырма-çатрасемпе усă курса, нимĕçсем Вознесенск хули тавра вăйлă укрепленисем туса тултарнă. Хула гарнизонне пулăшма вĕсем хăйсен пехотине, танкĕсен тата хăй тĕллĕн çӳрекен тупписен пысăк вăйĕсене илсе пынă. Вознесенск хули патне кăнтăр енчен пырса тухнă пирĕн çарсем тăшманпа урамсенче çапăçма пуçланă. Гитлеровецсем хăйсен тĕп вăйĕсене çав çарсене хирĕç янă. Пирĕн ытти чаçсем, тăшмана хушăри позицисенче çĕмĕре-çĕмĕре пырса, Вознесенск хулин хĕвелтухăçĕнчи тата çурçĕрти хĕррисене кĕрсе кайнă. Урамсенче хаяррăн çапăçнă хыççăн пирĕн çарсем тăшманăн хулари йышлă гарнизонне аркатса тăкнă, тăрса юлнă юлашкисене Кăнтăр Буг шывне пăрахнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисен шучĕ пысăк.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн разведкăна кайнă авиаци самолечĕсем Финн заливĕнче тăшман карапĕсен икĕ ушкăнне курнă. Совет летчикĕсем çав ушкăнсене темиçе хутчен те штурмланă, бомбăсем пăрахнă. Нимĕçсен 2.000-шер тонна таякан 2 судни тата хуралта çӳрекен карапĕпе катерĕ шыва путнă. Тăшманăн хуралта çӳрекен карапне летчик Каштанкин юлташ путарнă, çавăн чухне вăл хăй те герой вилĕмĕпе вилнĕ. Совет патриочĕ хăйĕн самолетне çав карап çине вăркăнтарнă та карап ăшне касса кĕнĕ. Вăйлă взрыв пулнă. Карап çавăнтах тинĕсе путнă. Пирĕн летчиксем, нимĕç караванне хыççăнах хăваласа пырса, Ассери портĕнче тăшманăн хуралта çӳрекен тепĕр карапне шыва путарнă.

Хура тинĕсре мина çине пырса сирпĕнсе кайнипе тăшманăн 1.600 тонна таякан судни путнă.

* * *

Литовец партизанĕсен «Вильнюс» ятлă отрячĕ 10 кун хушшинче тăшманăн 5 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Чугун çулăн çав участокĕнче вара поездсем темиçе кун хушши çӳреме пултарайман. Литовец партизанĕсен тепĕр отрячĕ нимĕçсен пысăк именийĕнче вырнаçнă гарнизонне аркатса тăкнă. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене, çавăн пекех имени управляющине вĕлернĕ. Çав отрядри партизансемех, минăсем лартса, тăшманăн икĕ поездне сирпĕнтерсе янă. Çав крушенире икĕ паровоз тата çар техникине турттарса пынă 16 вагон çĕмĕрĕлсе кайнă.

Пахчасем валли— çĕрсемпе вăрлăхсем

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ А. А. Андреев юлташ республикăсен Наркомземĕсене тата крайсемпе облаçсен çĕрĕç пайĕсене уйрăм тата коллективлă пахчасен халăткне аслăлатмашкăн профсоюз организацийĕсене пулăшма хушнă. Предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекен рабочисемпе служащисене пахчасем тума государствăн çĕр фондĕнчен пушă выртакан çĕрсене касса памалла. Кунсăр пуçне колхозсемпе килĕшсе, пахчасем валли колхозсен хăйсем усă курман çĕрĕсене те пама юрать. Хуласемпе ялсен сывăхĕнчи лайăх участоксене чи малтан çар сыннисен тата Отечественнăй вăрçă инваличĕсен çемьисене памалла. Рабочисемпе служащисене пахчасем валли çĕр апрелĕн 1-мĕшĕччен парса пĕтермелле.

СССР Наркомземĕ çĕрĕç органĕсене, шкулсемпе наука учрежденийĕсене çĕрулмипе пахча-çимĕçсем лартса ӳстерес ĕçре, çĕре сухаласа çӳрелес тата çĕнетес ĕçре, вăрлăхсем хатĕрлес ĕçре, пахча-çимĕçсене сиен тăвакан хурт-кăпшанкăсене тата ӳсен-тăрансен чирĕсене пĕтерес ĕçре халăха агротехника тĕлĕшпе пулăшма хушнă.

Çĕрĕç органĕсене колхозсенче, наука учрежденийĕсенче, шкулсен вĕренӳ хуçалăхĕсенче тата питомниксенче купăста, помидор тата ытти культурăсен калчисене ӳстерсе, рабочисемпе служащисене сутас ĕçе организацилеме хушнă. Çĕрĕç органĕсен, профорганизацисем панă заявкăсем тăрăх, сортсемовощь тата потребкоопераци магазинĕсенче рабочисемпе служащисене сутма кирлĕ таран вăрлăх уйăрса памалла. (ТАСС).

Совет Союзĕ тăрăх

Тытса илнĕ хĕçпăшал выставкинче

Ленинграда персе тăнă тупăсем

Ленинград фрончĕн çарĕсем ăнăçлă наступлени туса пынă чухне тăшманăн çар хатĕрĕсене питĕ нумай туртса илнĕ. Çапăçу хирĕсенче Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем тăшмантан хальхи йышши хĕçпăшалсене туртса илнĕ. Вĕсене халь тăшмантан тытса илнĕ хĕçпăшалсен выставкинче курма пулать.

Выставкăн артиллери пайĕнче чи малти вырăнта автоматлă 20 миллиметр калибрлă зенитнăй тупă «Марианна» ларать. Петергоф патĕнче çавăн пек тупăсен темиçе батарейине тытса илнĕ. Çавăнтанах Мускаври выставкăна инçете перекен 105 миллиметр калибрлă йывăр минометне илсе пынă. Унтан инçех мар бронетранспортерсем çинче вунă кĕпçеллĕ реактивлă минометсем лараççĕ. Вĕсене пĕлтĕр кăна туса хатĕрленĕ. Хăйсен çав çĕнĕ йышши минометне нимĕçсем сынсенчен пытарса усранă. Анчах совет çарĕсем çав тери вирлĕн наступлени туса пынипе гитлеровецсем, хăйсен пур çĕнĕ йышши хĕçпăшалĕсене те пăрахса хăварнă.

«Çак тупăпа нимĕçсем Ленинграда персе тăнă» тесе çырса хунă 105 миллиметр калибрлă йывăр тупă çине. Çав тупă Пулковăри çӳллĕ вырăнсем хыçĕнче тăнă, вăл 18.300 метр инçете пенĕ. Гатчина станцийĕнче нимĕçсем 19 километра перекен йывăр тупă лартнă.

Халь илсе пынă экспонатсенчен выставкăна курма пынă çынсем пуринчен ытла «Штейер» вездехода, 1943 çулта шухăшласа тунă 7,92 миллиметр калибрлă пистолет-пулемета (ăна Корсунь-Шевченковский районĕнчен илсе пынă), 10 тонна туртакан «Хейншель» автомобиле пăхаççĕ. Выставкăн инженернăй пайне Германин хăй тĕллĕн çӳрекен торпедине илсе пынă. Ăна Балтика çумĕнчи 2-мĕш фронт çарĕсем нумаях пулмасть тытса илнĕ. Ăна танксемпе кĕрешме тунă, ун ăшĕнче 30—40 килограмм сирпĕтекен япала пур. Ăна пралук тăрăх пыракан электричествăпа сирпĕнтерсе яраççĕ. Пралукĕн тăршшĕ 2 километра яхăн.

Нимĕçсен Хĕрлĕ Çар аркатса тăкнă чи çĕнĕ йышши техникин тĕслĕхĕсем советсен çар техники нимĕçсеннинчен лайăхрах та лайăхрах пулса пынине, наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç çарĕсене аркатса тăкмалла пыра-пыра çапнине кăтартса параççĕ.

Çитес кунсенче выставкăна Украинăри 1-мĕш, 2-мĕш тата 3-мĕш фронт çарĕсем нимĕçсен группировкисене аркатса тăкнă чухне тытса илнĕ хĕçпăшалсен тĕслĕхĕсене илсе пыраççĕ. Выставкăна халăх питĕ нумай çӳрет. Выставкăна уçăранпа ăна 2 миллион та 700 пин çын пырса курнă ĕнтĕ. (ТАСС).

Вырăс классикĕсен спектаклĕсене пăхса тухни

РСФСР-та вырăс классикĕсен спектаклĕсене пăхса тухмалли смотр вĕçленчĕ. РСФСР-ти 90 театр çав смотр вăхăтĕнче 200 пьеса ытла лартса панă. Островскин, Гоголĕн, Грибоедовăн, Лермонтовăн, Тургеневăн, Толстойăн, Чеховăн, Горькин пьесисене лартнă.

Смотрăн итогĕсене Мускавра РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленийĕ пухакан конференцире пăхса тухаççĕ. Çав конференцире театрсен художествăллă руководителĕсем тата рольсене чи лайăх вылянă артистсем те пулаççĕ. (ТАСС).

Ленинград облаçĕнчи колхозсене çĕнĕрен йĕркелесе яраççĕ

Ленинград облаçĕнчи ирĕке кăларнă 18 районра 900 колхоза ытла çĕнĕрен йĕркелесе янă. Пур колхозсенче те çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ. Ялхуçалăх инвентарьне юсаççĕ, вăрлăх пухаççĕ. Гатчина районĕнче колхозниксем хăйсен запасĕсенчен 338 центнер сĕлĕ, урпа тата тулă, 1180 центнер çĕрулми пухса панă. Районри колхозсенче 422 плуг юсанă, уя 657 тонна удобрени кăларнă.

Украинăри курортсем

Украинăра курортсем нумай пулнă. Унта çулленех 150.000 ĕçсыннине яхăн сывалнă, каннă. Фашистла нимĕç захватчикĕсем нумай курорта, канмалли çуртсене, пылчăкпа тата шывпа сыватакан темиçе лечебницăна ишсе сунтарса янă.

Хальхи вăхăтра 13 пысăк курорта юсаса йĕркелеççĕ. Чи малтан тумалли ĕçсем валли 9 миллион тенкĕ яхăн укçа панă. Çак çулта 15 санатори, пылчăкпа тата шывпа сыватакан 6 лечебница, 6 поликлиника ĕçлеме пуçлаççĕ. Май уйăхĕнче Славянскри, Осипенкăри тата Миргородри 5 курорт ĕçлеме пуçлаççĕ. Вĕсем чи малтан Хĕрлĕ Çарăн аманнă боецĕсене, курортра пурăнса сывалмаллисене, йышăнаççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă геройĕсем

1929 çулта пĕр авиачаçа хăй ирĕкĕпе пĕр комсомолец, Сталинград облаçĕнчи Калинински районри Свердлов ячĕпе тăракан колхоз членĕ, çамрăк каччă Владимир Илларионович ШЕВЧЕНКО пырса кĕнĕ. Вăл ун чухне колхоз уйхирĕсенче тракторист пулса ĕçленĕ. Действительнăй службăна пĕтерсен, В. И. Шевченко малалла вĕренме çар авиаци шкулне кĕнĕ, Хĕрлĕ Çар летчикĕ пулма ĕмĕтленнĕ. Шкулта çине тăрса, тăрăшса вĕреннĕ. Çапла вăл çав шкултан питĕ лайăх вĕренсе тухнă. Вăрçă пуçланнă кунсенче вăл ĕнтĕ командир пулнă. Хальхи кунсенче В. И. Шевченко—авиасоединени командирĕ. Унăн летчикĕсем Украинăри çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă.

Ӳкерчĕк çинче: Совет Союзĕн Геройĕ В. И. ШЕВЧЕНКО.

В. ИВАНОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники)

Çуракине большевикла хатĕрленер!

Хĕрлĕ Ялав лайăхрах ĕçлеме хушать

КУСЛАВККА. (Телефонпа). МТС-ра Чăваш АССР-ĕ 1943 çулта вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçан тӳлемелли иккĕмĕш премие илнĕ ятпа митинг пулса иртрĕ. Митингра 106 çын пулчĕ. Трактористсемпе трактористкăсем, çак наград çине тата лайăхрах ĕçленипе ответлеме пулса, конкретнăй обязательствăсем илчĕç.

— Пирĕн республика вăрçă вăхăтĕнче иккĕмĕш хут ĕнтĕ Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çакă вăл пысăк та чаплă чыс. Эпир çак наград çине тата вăйлăн тăрăшса ĕçленипе ответлĕпĕр. Кăçалхи çуракинче тракторсемпе лайăх ĕçлесе, çуракине кĕске вăхăтра ăнăçлăн вĕçлеме пулатпăр, — терĕ МТС директорĕ Лаврентьев юлташ.

МТС паянхи куна çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. Тракторсене юсамалли плана 100 процентпа пурнăçланă.

МТС коллективĕ кăçал, тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри плана 110 процент пурнăçлама, горючи 5 процент перекетлеме пулчĕ.

Г. КРЮЧКОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Тырпул тухăçлăхне татах ӳстерме пулчĕç

СĔНТĔР. (Хамăр корр., телефонпа). ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пирĕн республикăна 1943 çулта тухăçлă тырпул туса илнĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçан тӳлемелли иккĕмĕш премине пама йышăнни районри колхозниксемпе колхозницăсене тата ялхуçалăхĕнчи специалистсене питĕ хытă савăнтарчĕ. Партипе правительство пирĕн колхозниксен ĕçне пысăк хак парса чыс тунине ответлесе ĕççыннисем 1944 çулта татах та тимлĕнрех ĕçлеме, тырпул тухăçлăхне тата ытларах ӳстерме пулчĕç.

Коммунист Ефремов председатель пулса ĕçлекен «Çĕнĕ Юнкă» колхозра колхозниксем республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла туни çинчен радио тăрăх илтсенех колхоз правленине митинга пухăнчĕç.

— Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн республикăри колхозсем икĕ хутчен Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕç. Ку вăл пирĕншĕн пысăк савăнăç, пысăк чыс. Анчах çакă вăл эпир малашне лăпланса лармаллине пĕлтермест. Аслă наградăна пире 1944 çулта тата тухăçлăрах ĕçлеме хушать,—терĕ митингра колхоз бригадирĕ Б. Вазиков юлташ.

Бригада кăçал кашни гектартан 17-шер центнер тĕштырă туса илме обязательство илчĕ.

Бригадир панă сăмах колхозра ĕçпе сыхăнса пырать. «Çĕнĕ Юнкă» колхоз кăçал тырпул тухăçлăхне вăйлăн ӳстерме нумай ĕçсем туса ирттерчĕ, çуракине тухма тĕплĕн хатĕрленсе çитрĕ. План тăрăх, уйхире 2700 лав тислĕк кăлармалла пулсан, кунта 5580 лав кăларнă та ĕнтĕ. Кунсăр пуçне, çĕре çемçетме тата калчасене апат пама 1500 лав торф кăларса хатĕрленĕ, 54 центнер кĕл, 27 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата 25 центнер фекали пухса хатĕрленĕ.

Т. ИВАНОВ.

Колхозниксем килти тислĕке тăкаççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, мартăн 23-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Кипеçри «Трактор» колхоз çитес çуракине аван хатĕрленет. Вăрлăхсем çителĕклĕ таран сортласа хунă, вĕсен шăтас пахалăхне тĕрĕсленĕ. Колхоз тата колхозниксем кӳршĕри «Победа» колхоза 60 центнер кивçен вăрлăх панă. Кашни колхозник гектартан 100 пăт тыра туса илессишĕн кĕрешет. Колхозниксем колхоз хирне хăйсен килĕсенчен 30—40-шер лав тислĕк кăларчĕç. Колхозра тислĕке лайăх купаласа çĕртеççĕ. Вĕсем тислĕк купи айне çĕр чавса кирпĕчрен кăмака туса лартнă. Çав кăмакана тислĕк купаласа пынăçемĕн вут хурса ăшăтаççĕ. Çиелтен, купа тăрринчен, ăшă шыв ярса тăраççĕ. Çапла вара, тислĕк лайăх çĕрет. Çĕрнĕçемĕн ăна таптаса тăраççĕ. Пĕрремĕш бригадăра тислĕк тăкнă çĕрте кашни кун 14 çын ĕçлет.

С. ШАДИН.

Чăваш АССР-ěн 1-мěш созыври Верховный Совечěн VII-мěш Сессийě

Чăваш АССР-ěн 1944 çулхи бюджечě çинчен тунă доклад тăрăх тухса каланисем

Д. Я. Митьков депутатăн сăмахě

(Шěмшеш суйлав округě)

Депутат юлташсем! Халăх Комиссарěсен Совечě çак Сессире пăхса тухма тăратнă пирěн республикăн 1944 çулхи бюджечě хамăрăн халăх интересěсемпе, фашистла нимěç захватчикěсене хирěç пыракан кěрешÿ интересěсемпе таччăн çыхăнса тăрать.

Укçа-тенкě мобилизацилес ыйтусем, тупăшсене ÿстермелли майсене тупасси, хуçалăхра перекетлěх режимне çирěппěн пăхăнасси, материалсемпе укçа-тенкě ресурсěсемпе тěрěс усă курасси хальхи тапхăрта вăрçăпа хуçалăх тěлěшěнчен питех те пысăк вырăн йышăнса тăраççě. Бюджета ăнăçлăн пурнăçа кěртесси ěç тухăçлăхне малалла ÿстерсе пынинчен, продукци хакне йÿнетнинчен тата производствăпа финанс планěсене ирттерсе тултарнинчен килет. Çавăнпа та пěтěм общественноçа çак ыйтусем тавра мобилизацилес пулать.

Вăрçă вырăнти промышленность умне фронтпа тыла куллен кирлě япаласем парса тăрас тěлěшпе пысăкрах задачăсем лартрě. Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачě тăрăх 1943 çулхи плана 105,3 процент тултарнă. Вăл шутран куллен кирлě таварсем кăлармалли плана 118,8 процент пурнăçланă. Районри промышленность 1943 çулхи плана 120,5 процент тултарса, планран ирттерсе çěршыва 830 пин тенкěлěх продукци панă. Анчах та хăшпěр районсенчи промкомбинатсем хăйсен планěсене тултарман. Çапла, сăмахран, Хěрлě Чутай промкомбиначě 78,7 процент, Первомайски промкомбиначě 86,4 процент, Шăмăршă промкомбиначě 96,5 процент, Етěрне промкомбиначě 97,8 процент тата Шупашкар промкомбиначě 99 процент çеç тултарнă. Асăннă промкомбинатсем начар ěçлени çинчен Чăваш АССР Верховный Совечěн VI-мěш Сессийěнче те кăтартса панăччě, анчах Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачě вěсен ěçне лайăхлатас тěлěшпе кирлě мерăсене йышăнман. Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачěн руководителěсем, час-часах плана пěтěмěшпе тултарнипе кăна интересленеççě, анчах плана пур ассортиментсем тăрăх та тултармалла тăвассишěн тăрăшмаççě, уйрăм промкомбинатсен ěçне тěрěслемеççě. Вырăнти промышленность предприятийěсен ěçěнчи пысăк çитменлěх вăл—вырăнти чěртаварсемпе начар усă курни пулать, çавна пула вара промкомбинатсем тикěс ěçлемеççě, производство заданийěсене те тултараймаççě. Продукци пахалăхне лайăхлатас ыйту çине те çителěксěр çавăрăнса пăхаççě.

Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачěн, çак çитменлěхсене шута илсе, 1944 çулхи плана пěтěм продукци енěпе те тата кашни продукци тăрăх та кашни предприятиех тултармалла тăвас пулать. Плана тултарассишěн кěрешессине продукци, пахалăхне лайăхлатассишěн тата производствăри культурăлăха ÿстерессишěн кěрешнипе таччăн çыхăнтарса пымалла.

Вырăнти промышленность умěнче тăракан питех те кирлě задачăсенчен пěри вăл—пур оборудованисемпе тата производствăри пěтěм вăйсемпе туллин усă курса, çěршывпа фронта ытларах продукци парса тăрасси пулать.

Вырăнти промышленность предприятийěсем час-часах квалификациллě кадрсем çитменрен йěркеллě ěçлеймеççě. 1944 çулта уйрăм предприятисен ыйтăвěсене шута илсе кадрсем хатěрлес ěçе пур çěрте те организацилемелле, производствăпа Отечественнăй вăрçă инваличěсене, хěрарăмсене тата çамрăксене анлăн явăçтармалла.

Рабочисемпе инженерла-техникла работниксен пурнăçпа йăла условийěсене лайăхлатма 1944 çулта подсобнăй хуçалăхсем организацилес тěлěшпе тимлěн ěçлемелле, çапла вара кашни предприятире апат-çимěç бази тумалла. Çавăн пекех предприятисенче туртăм вăйě пулмалла. Ăна валли апат-çимěç базине тăвас тěлěшпе татăклă мерăсем йышăнас пулать.

Пирěн Çěрпÿ районěнчи вырăнти промышленность иртнě çулта хăйěн ěçне чылаях лайăхлатрě. Çулталăкри плана промкомбинат 163 процент, апат-çимěç комбиначě 185 процент, Туçари артель 110 процент, Хурнсурти артель 275 процент, Упакассинчи артель 254 процент, механизациленě арман 111 процент тата çу завочě 109 процент тултарнă.

Анчах та уйрăм предприятисем хăйсен производство планěсене тултарайман. Çапла, «Перламутр» артель плана 54 процент, профшкола — 82 процент, типографи—88 процент, вăрманпромхоз—54,4 процент çеç тултарнă. Нумай артельсемпе предприятисенче ěç тухăçлăхě пěчěк. Вěсенчен хăшпěрисем продукци туса кăлармалли плана ассортиментсем тăрăх тултарман.

Çěрпÿ хулинчи предприятисемпе артельсем ăнăçлăн ěçлесси гидроэлектростанцинчен нумай килет. Анчах вăл иртнě çулхи июльтенпех ěçлеместь. Эпě Халăх Комиссарěсен Совечěнчен Чăвашсельэлектро руководстви тěлěшпе мерăсем йышăнма тата гидроэлектростанцине çывăх вăхăтрах юсаса ěçе яма строительство материалěсем тупас енěпе пулăшма ыйтатăп.

1943-мěш ялхуçалăх çулěн итогěсем совет тылěн хăватлă вăйне кăтартса параççě. Çěрпÿ районěнчи колхозниксемпе колхозницăсем, пěтěм республикăри ěçсыннисем пекех, Хěрлě Çар тунă чаплă çěнтерÿсемпе хавасланса иртнě çулта хăйсен хирěсенче икě-виçě хут вăйлăрах ěçлерěç, ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вěçлерěç, государствăна ялхуçалăх продукчěсем памалли плансене срокчен тултарса, государствăна 1944 çулшăн та аванс шучěпе тырă пачěç. Унсăр пуçне районри колхозсемпе колхозниксем государствăна темиçе вунă пин пăт тырă тата çěрулми сутрěç. Хальхи вăхăтра Çěрпÿ районěнчи колхозсем çуракине ăнăçлăн хатěрленеççě. Вăрлăх фондне пěтěмпех хывса çитерне. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсаса пěтереççě.

Иртнě çулта пирěн районри колхозсем выльăх-чěрлěх ěрчетмелле ÿстерес тěлěшпе те чылай çитěнÿсем турěç. Выльăх-чěрлěх ěрчетмелле государство планне ěне-выльăхсем енěпе 120 процент, сыснасем енěпе 119 процент, сурăхсемпе качакасем енěпе 121 процент тултарнă. Юлашки икě çул хушшинче — 1942 тата 1943 çулсенче ěне-выльăхсен йышě 2,4 хут, сыснасен хисепě 1,5 хут, сурăхсемпе качакасен хисепě 3 хут ÿснě.

Çитěнÿсем чăнах та пысăк. Анчах эпир пурне те туса çитермен-ха. Пирěн халăх Хěрлě Çар вăйлăн наступлени туса пынине тата Сталин юлташăн историллě тухса каланисене патриотла ěçсемпе ответлет. Эпир промышленность, транспорт тата ялхуçалăх ěçне лайăхлатма, тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чěрлěх продуктивноçне малалла ÿстерсе пыма, çапла вара, çěршывпа фронта апат-çимěç, промышленноçа чěртавар ытларах парса тăшмана çěнтерес сехете çывхартса пыма тивěçлě.

Депутат юлташсем! Эпě хамăр республикăн 1944 çулхи бюджетне Бюджет Комиссийě тунă улшăнусене шута илсе тата 1941, 1942, 1943 çулсенчи бюджета пурнăçлани çинчен калакан отчетсене çирěплетме сěнетěп. Бюджетăн доход пайě укçа-тенкě пухăнас хисеппе килěшÿллě, вăл промышленноçпа ялхуçалăхне аталантарма тата социаллă-культурăллă мероприятисене пурнăçа кěртнě çěре каякан расходсене пěтěмпех витме май парать. Çакăнпа пěрлех эпě Чăваш АССР Верховный Советěнчен Çěрпÿ районěн бюджечěн расход пайне 59.200 тенкě чухлě ÿстерме ыйтатăп. Ку хисепрен 15.000 тенки Çěрпÿри вăтам шкул çурчěн тăррине витме тата шкулти 18 кăмакана пăсса юсама, 20.200 тенки ачасен яслисен çурчěсене юсама, 24.000 тенки ача амăшěсен çуртне юсама кирлě.

Депутат юлташсем! Юратнă çулпуçăмăр тата полководец аслă Сталин ертсе, хавхалантарса пынипе, пěтěм совет халăхě ăнăçлă наступлени туса пыракан мухтавлă Хěрлě Çара хастарлăн ěçленипе пулăшса тăрать. Пирěн орденлă Чăваш Автономиллě Советлă Социализмлă Республикине 1943 çулта тухăçлă тырпул туса илнěшěн Оборонăн Государственный Комитечěн куçса çÿрекен Хěрлě Ялавне пани пире 1944 çулта татах та лайăхрах ěçлеме, татах та тухăçлăрах тырпул туса илме хушать. Çěршыв тылра ěçлекенсене пěрмаях малалла кайма хушать.

Совет халăхě Ленин—Сталин ялавěпе çěнтерÿ патне шанчăклăн пырать. Сталин юлташ ертсе пынипе, мěнпур йывăрлăхсене çěнтерсе тăшмана тěпě-йěрěпех аркатса тăкар! **(Алă çупаççě)**

Тăван воинсемпе вěсен çемьисемшěн

Совет çынни хăй Тăван çěршывăн çулăмлă патриочě пулнине, çěнтерÿшěн тăрăшнине ěçре кăна мар, çар çыннисен çемьисене, Отечественнăй вăрçă инваличěсене куллен пулăшнипе те уçăмлăн кăтартса парать. Совет халăхě, унăн правительстви Хěрлě Çар воинěсемпе вăрçă инваличěсене пулăшассине тăван ěç тесе шутлаççě.

Нумай тěрлě пулăшусемпе çăмăллăхсем парать пирěн совет государстви çар çыннисен çемьисене. Пирěн республикăра иртнě 1943 çулта çар çыннисене пособисем 55.806 пин тенкě тата пенсисем 10.172 пин тенкě панă. Ялхуçалăх налог тÿлес, выльăх-чěрлěх продукчěсем тăратас енěпе нумай çăмăллăхсем панă.

Пособисемпе пенсисем тата тěрлě çăмăллăхсем пани çар çыннисен çемьисене пулăшас енěпе тунă ěçěн пěр пайě кăна пулать-ха. Пирěн Чăваш республикинчи ěççыннисем, пěтěм Совет Союзěнчи халăхсем пекех, çар çыннисен çемьисемшěн куллен тимлěн тăрăшаççě. Çак ěçе хутшăнман рабочисемпе колхозниксем тата служащисем çукпа пěрех. Вěсем иртнě çулта Тăван çěршыва хÿтěлекенсен çемьисене 108.824 пăт тырă, çăнăх тата ытти çимěçсем, 876.000 тенкě укçа парса пулăшнă. Кунсăр пуçне, çар çыннисен çемьисене колхоз фермисенчен выльăх-чěрлěхсем нумай уйăрса панă, вутă хатěрлесе турттарса панă.

Вырăнти промышленноçпа промысла кооперацинчи пуянлăхсемпе усă курса, çар çыннисен çемьисем валли 31.000 мăшăр атă-пушмак, 16.000 тěрлě тумтир, хуçалăхра кирлě япаласем: сěтелсем, пукансем, витресем тата ытти те нумай туса панă. Хěл пуçланас умěн çар çыннисен çемьисене 25.000 мăшăр çăматă сутнă. Кунсăр пуçне тумтирсем, атă-пушмаксем нумай юсаса панă.

Çар çыннисен пурнăçпа йăла условийěсене лайăхлатма 1943 çулта 8200 çемьене 10.203 пуç выльăх-чěрлěх панă. Çав выльăхсене пăхса усрама тěрлě апат-çимěç 18.750 пăт панă. Çар çыннисен çемьисен пурин те тенě пекех хăйсен пахчисем пур. Çав пахчасенче тěрлě çимěçсем лартса туса пулăшнă. Çěрулми вăрлăхě кăна 385 тонна панă. Иртнě çулхи мартăн пěррěмěшěнчен пуçласа декабрь уйăхне çитиччен 2500 çемьене çěнě хваттерсем панă.

Совет организацийěсем çутěç тата сывлăха сыхлав органěсемпе пěрле ачасен учрежденийěсене ĸарас тата вěсен ěçне лайăхлатас тěлěшпе нумай ěçсем тунă. 1943 çулта çěнěрен 24 çěрте яслисем, 41 çěрте площадкăсем уçнă. Вěсене 2260 ача çÿрет. Пионерсен лагерěсенче фронтовиксен 5000 ачи пулнă. Улатăрта ачасем валли санатори уçнă, Пăрачкав районěнче тата Канаш хулинче ачасен лагерěсене уçнă. Вěсенче 365 ача пулнă.

Фронтшăн, çěнтерÿшěн пулсан, пирěн совет халăхě нимěн те шеллемест.

Ялти художествăллă пултарулăхăн республикăри смотрě

Ялти художествăллă пултарулăхăн республикăри смотрěн виççěмěш кунěнче Вăрнар тата Шăхасан районěсенчи коллективсен пултарулăхне кăтартрěç.

Вăрнар районěнчи Кăмашари Сталин ячěпе тăракан колхоз хорě чăваш халăхěн юррисене юрласа пачě. Вăл хор ялти художествăллă пултарулăха пăхса тухнă тапхăрта кăна ÿссе çирěпленнě. Апла пулин те хăйěн репертуарěнчи юрăсене ăста юрласа пачě. Уйрăмăнах «Колхоз юрри», «Шурă кăвакарчăн» юрăсене лайăх юрланине палăртмалла. Яковлева юлташ «Чикěре» юрăна ăста юрларě.

Шăхасан районěнчи культура çурчě çумěнчи коллектив пултарулăхне пăхса тухасси пысăк çěкленÿпе иртрě. Юрă ансамблě Шульгина юлташ ертсе пынипе хальхи тапхăрти юрăсене тата халăх юррисене юрласа кăтартрě. Ансамбль репертуарěнче классиксен произведенийěсем те пур. Уйрăм çынсем те лайăх юрласа, ташласа пачěç. Фарбер, Юсуновăпа Слесарева юлташсем юрланипе, Дувакина юлташ «Мишка Одессит» юрра юрланипе куракансем тулли кăмăлпа кěтсе илчěç. Культура çурчě çумěнчи чăваш хěрěсен хорě те хăйěн пысăк пултарулăхěпе ăсталăхне кăтартрě. Унăн репертуарěнче чăваш юррисем кăна мар, классикăллă произведенисем те пур.

Мартăн 23-мěшěнче ялти художествăллă пултарулăхăн республикăри смотрě вěçленчě. Смотра мала тухнă коллективсене тата уйрăм çынсене, смотр итогěсене тунă хыççăн, Хисеплě грамотăсемпе укçа парса премилеççě.

Ют çěршывěсенче

Мексика журналěнче Сталин юлташ çинчен статьясем пичетлесе кăларнă

МЕКСИКО, мартăн 24-мěшě. (ТАСС). «Тодо» ятлă журнал Мансисидор профессор çырнă статьясене пичетлесе кăларать. Статьясен пěтěмěшле ячě — «Сталин — хурçă çын».

Халě пěтěмпе тăватă статья пичетлесе кăларнă. Вěсенче Мансисидор профессор Сталин юлташ патша йěркине хирěç мěнле кěрешни çинчен питě кăмăлласа тěплěн çырнă, халăх ирěкěшěн, Октябрьти революцире çапăçса илнě тивěçлěхсене хÿтěлесе çапла кěрешнине кăтартнă. Автор лайăх палăртса çапла çырать: «Ленинпа Сталин революцие ертсе пынă. Сталин фронтран фронта çÿресе, пур çěрте те тăшмана хирěç тăрас ěçе организациленě, Деникина, Врангеле тата ытти тăшмансене те аркатса çěмěрсе тăкас ěçе йěркелесе ертсе пынă,' пěр çěнтерÿ хыççăн татах çěнě çěнтерÿсем туса пынă. Сталинăн çак иртнě ěçěсене пěлекенсем вăл халě нацистсен çарěсене хирěç пыракан кěрешÿре Хěрлě Çара питех те пултаруллă ертсе пынине ăнланса илеççě. Сталинăн çар организаторě, çар стратегě, çарсен çулпуçě пулма тивěçлě ăсчуçě никамăннинчен те хăватлăрахине ăнланса илеççě. Вăрçă енчен илсе пăхсан, Сталин тунă чаплă ěçсене çав тери пысăка хумалла, вăрçă тěлěшпе ун пек пысăк паха ěçсем текех тупма та çук пулě. Вăл Хěрлě Çарăн нацистсен дивизийěсене аркатса пыракан паянхи питех те чаплă çěнтерěвěсен тупсăмне тупса пěлесшěн, унăн çав тупсăма иртнě çапăçусен хирěсенче шырас пулать. Советсен çулпуçě çав вăхăтри хирсенче ěнтě йěркелěх, дисциплина туса хума пултарнă. Пěр минут вăхăт та ахаль сая ямасăр, тунсăх шухăша каймасăр, вăл ун чухнех мěнпур факторсемпе обстоятельствăсен тахçан малтанах мěн пулассине кăтартса тăракан анализне туса тухнă, халě те вăл çавăн пекех ăслă ěçлет»,—тесе кăтартса çырнă Мансисидор хăйěн пěр статьинче.

Союзниксен авиацийěн ěçěсем

ЛОНДОН, мартăн 24-мěшě. (ТАСС). Официально çапла пěлтереççě: мартăн 23-мěшěнче Америка авиацийě Эн Сен-Пьер чугун çул узелě çине (Бельги) бомбăсем пăрахнă.

Америка бомбардировщикěсен пысăк соединенийěсем Мюнстерти çар завочěсем çине, Брауншвейгри промышленность объекчěсем çине тата Германири ытти объектсем çине те бомбăсем пăрахнă. Ку тапăнура темиçе çěр бомбардировщик пулнă. Нимěçсен 20 самолетне персе ÿкернě. Американецсен 27 бомбардировщикěпе 5 истребителě каялла таврăнман.

ЛОНДОН, мартăн 24-мěшě. (ТАСС). Мартăн 24-мěшě ыран тенě чух çěрле Англи бомбардировщикěсем Францири чугун çулпа çар объекчěсене атакăланă, çавăн пекех тата Дортмундпа Хěвеланăç Германири ытти объектсене те тапăннă.

Америкăн Англири парашютлă çарěсем умěнче Черчилль тухса калани

ЛОНДОН, мартăн 24-мěшě. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пěлтерет: премьер-министр Черчилль Америка генералěсемпе — Эйзенхауэрпа, Брэдлипе тата Брерстонпа пěрле Америкăн Англири парашютлă çарěсен базине американецсен парашютлă тата планерлă çарěсен маневрне курма пынă.

Черчилль кěске сăмах тухса каланă. «Часах ака çитěн,—тенě Черчилль, — Америка конституцийěн хавхалантаракан сăмахěсене хăвăр мěнле ěненсе тăнине кăтартса пама тата тăшмана пырса çапма май килсе тухать. Çавăн пек пырса çапни, вăл кирек мěнле пулсан та, тěнчене пирěншěн пуриншěн те анлăрах та лайăхрах туса хурать. Эпир çавна пурнăçа кěртме çирěп шут тытрăмăр. Эсир кунта пулнишěн эпě турра тав тăватăп. Сире пурне те пěтěм чун-чěререн ăнăçу тума ырă сунатăп».

Çак сăмах хыççăн Черчилль тата унпа пěрле пынă çынсем планерсен рейсěсене тата снаряжение пăхса тухнă. Унтан вăл çарсемпе çапăçура кирлě снаряжени турттаракан тата континент çине çěмěрсе кěнě самантра кăтартса паракан тěрěслÿ тÿссе ирттермелле пулать, тенě.

Рузвельт калани

ЛОНДОН, мартăн 23-мěшě. (ТАСС). Рейтер агентстви пěлтернě тăрăх, США президенчě Рузвельт çапла каланă: Америкăн хěçпăшаллă вăйěсем çапăçусенче писěхрěç, вěсем ирěке кăларакан хăватлă çар пулса тăчěç. Июнěн 4-мěш кунне «Арми кунě» тесе пěлтернě декларацийěнче президент çапла каланă: кăçал Америка çарěн хастарлăх, пултарулăх тата сывлăхла вăй-хал тěлěшěнчен питě пысăк тěрěслÿ тÿссе ирттермелле пулать, тенě.

„Гетеборгс Моргонпост" хаçат Румынипе Болгарири лару-тăру çинчен çырни

ГЕТЕБОРГС, мартăн 22-мěшě. (ТАСС). «Гетеборгс Моргонпост» хаçатăн Лондонри корреспонденчě çапла пěлтерет: Бухарестри халăха вăскасах урăх çěре куçараççě. Çурçěр Буковинăпа Бессарабири халăха урăх çěре куçарасси çинчен официальнăй приказ кăларнă. Стамбултан илнě хыпарсем тăрăх, Антонеску правительствине çěнетсе урăхлатмалла.

Болгарире нимěçсен СС отрядěсем йышши çар полицийěн пысăк чаçěсене тунă. Вăл чаçсене оппозицие, пуринчен малтан çарти оппозицие, кěрешме тунă тесе шутлаççě.

НИМĚÇСЕМ БОЛГАРИЕ ОККУПАЦИЛЕМЕ ХАТĚРЛЕННИ

СТАМБУЛ, мартăн 23-мěшě. (ТАСС). Шанма тивěçлě ушкăнсенче илтсе пěлнě тăрăх, нумаях пулмасть, Болгарие нимěç квартирьерěсем пынă. Вěсем Болгарие пымалли ултă нимěç дивизийě валли пурăнмалли çуртсем тупса хумалла. Çав ултă дивизире Лотарингири салтаксем пуринчен те ытларах.

Малта асăннă ушкăнсенчех çапла каласа кăтартнă: çак кунсенче Болгарири регент совечěн членě Кирилл принц Гитлерпа курнăçса каласнă.

БОЛГАРИ РЕГЕНЧĚСЕМ ГИТЛЕРПА КИЛĚШСЕ ТАТАЛНА

СТАМБУЛ, мартăн 24-мěшě. (ТАСС). София хулинчи лайăх пěлсе тăракан ушкăнсенчен илнě хыпарсем тăрăх, çак кунсенче Болгарин регент совечěн членěсем Гитлер чěннипе унăн ставкинче пулнă. Гитлер вěсемпе «политика тата вăрçă тěлěшпе пулса иртнě юлашки ěçсене», пуринчен те ытларах Хěрлě Çарăн çитěнěвěсем хăратса тăнине шута илсе, «Балкана хÿтěлес ыйтăва» сÿтсе-явнă. Вěсем Гитлер кăларса тăратнă ыйтусемпе пурипе те килěшнě. Гитлерăн требованийěсенчен чи пали вăл — Болгари вăйěсене урăхла йěркелесси тата Болгари çарěсене активлăн усă курасси. Регентсем Болгари çарěсене Румынине кěртсе, Çурçěр Добруджăна оккупацилеме килěшнě.

Михов генерала нимěçсен Румынири çарěсен командующийě патне чěннě. Унта Михов генерала Болгари çарěсене Румынине кěртес тěлěшпе тěплě кăтартусем панă.

НИМĚÇСЕМ РУМЫНСЕМПЕ БОЛГАРСЕН ХУРА ТИНĚС ХĚРРИНЧИ ХУЛИСЕНЕ ОККУПАЦИЛЕНĚ

ЛОНДОН, мартăн 24-мěшě. (ТАСС). Рейтер агентстви паян Стамбул хулинче илнě шанчăклă хыпарсем тăрăх çапла пěлтерет: нимěçсем румынсемпе болгарсен Хура тинěс хěрринчи пур хулисене те пěтěмěшпех тěрěслесе тăраççě. Çавăн пекех тата нимěçсем Дунай шывěн Будапештпа Галац хушшинчи шывпа çÿремелли мěнпур хатěрсене конфискациленě.

ГЕРМАНИ ÇАРĚСЕМ РУМЫНИРЕ

ЛОНДОН, мартăн 24-мěшě. (ТАСС). Рейтер агентстви Цюрих хулинчен çапла пěлтерет: румынсен ěненме тивěçлě ушкăнěсенче ыйтса пěлнě хыпарсем тăрăх, Германи çарěсем Румынине кěрсе кайнă. Халě вěсем Венгрипе Румыни чикинче тăракан Румынине Венгри çарěсене вырăс фронтне яраççě. Нимěçсем венгрсемпе румынсен чаçěсене пěрле тăратмаççě, мěншěн тесен вěсем пěр-пěрипе тытăçса илнисем пулнă.

Венгрири лару-тăру çинчен

ЛОНДОН, мартăн 24-мěшě. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пěлтерет: венгерсен Стамбулри ушкăнěсем ěнентерсе каланă тăрăх, мартăн 22-мěшěнче пěр кěске вăхăт хушши çеç пулса иртнě лару хыççăн «Венгри парламенчě хăйěн сессине кайран, мěнле те пулин урăх вăхăтра туса ирттермелле тунă».

Халě паллă пулнă тăрăх, Хорти адмирал Гитлер патěнчен Будапешта мартăн 22-мěшěнче самолетпа таврăннă. Унăн самолечě Будапештри аэродрома анса ларнă. Унпа пěрле Будапешта Венгрин Берлинри посланникě Стояи генерал, генеральнăй штаб начальникě Сомбатхейи генерал тата çар министрě Чатаи килнě. Хорти аэродромран тÿрех король дворецне кайнă. Унта вăл «Венгри пурнăçě» ятлă партин лидерěпе Лукачпа канашланă. Çак канашлу хыççăн Венгрин премьер-министрě Каллаи отставкăна тухнă та Будапештран тухса тарнă. Пěлекен çынсем каланă тăрăх, Каллаи Будапештран тухса кайиччен Венгри çарěсене приказ панă. Çав приказра вăл Венгри çарěсене захватчиксене хирěç тăма хушнă.

Король дворецěнче лару пынă вăхăтра эсэсовецсен ятарласа тунă отрядěсемпе гестапо чаçěсем либерал-демократсен тата социал-демократсен партийěсен, çавăн пекех тата ялти вак хуçасен партийěн лидерěсене тыта-тыта хупнă. Çавăнпа пěрлех СС чаçěсем урамсем тăрăх патрульре çÿренě. Гусарсен тата механизированнăй дивизисен штабěсем вырнаçнă çурт çывăхěнче тытăçусем пула-пула иртнě.

Çěнě правительство составне Каллаипе Бетлен партийěнчен ултă çын, Имреди партийěнчен виçě çын кěнě. Шалти ěçсен çěнě министрě Андор Ярош Гиммлерăн çывăх тусě пулса тăрать. Авиацин Будапешт çывăхěнчи Мессершмитт заводěнче пěлтěр 8 кун хушши пынă забастовка вăхăтěнче Андор Ярош забастовка тăвакан рабочисене персе пăрахма ыйтнă.

Италири вăрçă ěçěсем

ЛОНДОН, мартăн 20-мěшě. (ТАСС). Союзниксен Италири çарěсен главнăй штабě çапла пěлтерет: тăшман хăйěн Кассинăри опорнăй пункчěсене çирěпленсе ларчě тата пěр пысăках мар çÿллě вырăна каялла туртса илчě. Кассино хулипе монастырьтен анатарахри сăрт айккинче хаяр çапăçусем пыраççě. Американецсен 5-мěш армийěн тěп фрончěн ытти участокěсенче тата союзниксен Анцио патěнчи плацдармěнче тěллěн-тěллěн вăйлă çапăçаççě. Çапах та фронт тăршшěпех паллă улшăнусемех пулман. Акăлчансен 8-мěш армийěн фронтěнче патрульсем тытăçа-тытăçа илнě, çавăн чухне тăшмана çухатусем кÿнě, тыткăна илнисем пур.

Ěнер союзниксен авиацийě тăшманăн Австрипе Югославири, çавăн пекех тата Италин хěвеланăç çыранěнчи объекчěсене атакăланă. Союзниксен Вăтаçěр тинěс районěнчи сывлăш-çар самолечěсем 1.800 вěçеве яхăн тунă. Тăшман авиацийěн самолечěсем çапăçусен районěнче кун каçа çěр вěçев ытла тунă.

Вăтаçěр тинěсěн вăтам пайěнче французсен çăмăл çар карапěсем тăшман суднисен пěчěк караванне тěл пулнă та 3 суднине шыва путарнă, кунсăр пуçне тата тепěр судни путнă пулě тесе шутлаççě.

ЛОНДОН, мартăн 21-мěшě. (ТАСС). Союзниксен Италири Çарěсен главнăй штабě çапла пěлтерет: Кассино хулишěн çаплах çапăçусем пыраççě. Тăшман хăйěн опорнăй пункěсенче çирěпленсе ларнă та питě хытă хирěç тăрать, вăл хулапа тупăсемпе вăйлăн пеме пуçланă. Апла пулин те, Çěнě Зеланди çарěсем тăшманăн çирěплетнě пункчěсене пусарса пыраççě, нумай çынна тыткăна илнě. Анцио районěнчи плацдармра акăлчансен чаçěсем икě хутчен ăнăçлăн тапăннă. Тăшмана пысăк çухатусем тÿстернě. Союзниксен артиллерийě пěр çěре вăйлăн персе тăнă. Акăлчансен 8-мěш армийěн фронтěнче патрульсем вăйлăн тытăça-тытăça илнě, икě енчен те артиллери персе тăнă.

Союзниксен авиацийě ěнер тăшманăн паха çар объекчěсене темиçе хутчен ăнăçлăн тапăннă.

ÇУРÇĚР ИТАЛИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

СТАМБУЛ, мартăн 24-мěшě. (ТАСС). Кунта килсе тăракан хыпарсем тăрăх, Çурçěр Италири оккупаци влаçěсемпе Муссолини влаçěсем унти итальянецсене мобилизацилесе çара илсе кайма хăтланаççě. Анчах та темěн чухлě тăрăшсан та, вěсен ку ěçě малтанхи пекех путланса пырать.

Февралěн 19-мěшěнче Милан хулинчен пěр поезд тухнă. Çав поезд ирěксěр мобилизациленě итальянецсене лартса пынă. Анчах поезд малалла пынă май, ун çинчен итальянецсем çурри ытла тарса пěтнě. Çав тарнă итальянецсем нумайěшě партизансемпе пěрлешнě.

Конельянора (Гравизо сывăхěнче) итальянецсен патриочěсем мобилизаци пункчěн пуçлăхне вěлернě. Пармăра пěлсе юлайман çынсен ушкăнě фашистсен полици отрячě çине гранатăсем вăркăнтарнă.

Февралěн 26-мěшěнче Милан вокзалěнче вагонсене сирпěнтерсе янă. Çав вагонсем çине мобилизациленě итальянецсене Германие лартса ямалла пулнă.

Çавăн пекех оккупантсемпе фашистсен влаçěсен представителěсене те час-часах тапăнаççě.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПАÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, мартăн 20-мěшě. (ТАСС). Югославирен пěлтернě тăрăх, юлашки кунсенче Словенири фронтăн пур участокěсенче те хаяр çапăçнă. Çав çапăçусенче халăха ирěке кăларассишěн кěрешекен çарăн 14-мěш дивизийě уйрăмах чаппа тухнă. Словенире юлашки наступлени вăхăтěнче гитлеровецсен 1.900 салтакпа офицер пěтнě. Витане сывăхěнче нимěçсен пысăк ушкăнне (ку ушкăнăн танксемпе артиллери те пулнă) аркатса тăкнă. Приедорпа Омарск тăрăхěнче халăха ирěке кăларассишěн кěрешекен çарăн боецěсем тăшман бронепоездне пěтерсе тăкнă тата нумай тěлте чугун çула ишсе юрăхсăра кăларнă.

Ответлă редакторăн заместителě **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĚ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителěн — 4—26, парти пурнăç пайěн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайěсен 5—31, издательство конторин —0—23.

Ч...-...-... №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 ц. Тираж 14.42...

КТ-00396